

Вут-çулăмра çуралнă кĕнеке

Леонид Агаковăн

«Ылтăн вăчăра» повеçĕн историйĕ

Леонид Яковлевич Агаков

(1910-1977)

чăваш халăх çыравçи, пирĕн чаплă ентеш çуралнăранпа 100 çул çитрĕ

Леонид Агаков

1925-1927 çулсенче

Етĕрнери педагогика техникумĕнче вĕреннĕ

Леонид Агаков

1941-1944 çулсенче Тăван çĕр-шывăн аслă вăрçинче малтан рота командирĕ пулса, кайран дивизи хаçачĕн корресподенчĕ пулса çапăçать

1943 çул

- Сентябрĕн 30-мĕшĕнче эпĕ(Л.А) хамăн дневнике çапла çырнă: «Терюха ялĕ. Терехов р-нĕ. Гомель облаçĕ. Ĕнер нихçан курманнине куртăм…Ку ялта нимĕçсем вăтăр сакăр ял çыннине пухса пĕр пўрте хупнă та чўрече витĕр шалалла граната ывăтнă, пўртне çунтарма тытăннă. Çынсем алăка çĕмĕрсе сике-сике тухнă. Вара вĕсене кил хушшинче хăшне персе вĕлернĕ, хăшне чиксе пăрахнă, унтан вутта пăрахса çунтарнă. Хам куçпа куртăм çунса кăмрăкланнă çынсен кĕлеткисене. Пурте пур унта – ватти те, вĕтти те. Ах, тискер-çке! Акт çыртăмăр.

- Обер-ефрейтор вермахта Иоганнес Гердер писал в своем дневнике в первые месяцы пребывания на белорусской земле: «25 августа. Мы бросаем гранаты в жилые дома. Дома очень быстро горят. Огонь перебрасывается на другие избы. Красивое зрелище! Люди плачут, а мы смеемся над слезами. Мы сожгли таким образом уже деревень десять. 29 августа. В одной деревне мы схватили первых попавшихся 12 жителей и отвели на кладбище. Заставили их копать себе просторную и глубокую могилу. Славянам нет и не может быть никакой пощады. Проклятая гуманность нам чужда».

Тепĕр темиçе кунтанах «Совет патриочĕ» дивизи хаçатĕнче Л.Агаков çырнă «***Убийцы***» ятлă очерк пичетленсе тухать.

Леонид Яковлевич курни - илтни çинчен манаймасăр «***Персе вĕлернĕ ача***» повесть сыпăкĕсене çырма пуçлать.

Генрих Шварц сăнарĕ уçăмлансанах повеçе «***Ылтăн вăчăра***» тесе ят парать.

Çак повесть сыпăкĕсене çырнă вăхăтра Хатынь ятлă белорус ялĕнче хăрушă трагеди пулса иртет…

Хатынь

Нимĕнле географи картти çинче те эсир ку белорус ялне тупаймăр. Фашистсем ăна 1943 çулта ял ç ыннисемпе пĕрле çунтарса янă.

Вутра 149 ял çынни, вĕсенчен 75 ача çунса кайнă.

3 çын кăна чĕрĕ юлнă

Тăван çĕр-шывăн аслă вăрçинче Раççей, Украина тата Белорусси территорийĕ çинче фашистсем 30 пин ытла хулапа яла, çĕршер пин мирлĕ çынна пĕтернĕ. Фашистсене хирĕç 3 пине яхăн партизан отрячĕ çапăçнă. Вĕсенче 16 çула çитмен ачасем те тăшмансене май килнĕ таран тавăрма пулăшнă.

1944 çулта Совет çарě Украинăна, Белоруссие, Литвана, Латвие ирěке кăларнă. Çав вăхăтра Леонид Агаков аманса киле таврăнать, чăваш кěнеке издательствин тěп редакторěнче ěçлеме пуçлать. 1946 çулта «Ялав(Знамя)» журналăн пěрремěш номерěсенчех «Ылтăн вăчăра» повесть пичетленме пуçлать. Журнал тиражě 2 хут ÿсет.

1948 çулта
«Ылтăн вăчăра» уйрăм кĕнекен пичетленсе тухать.
62 çул хушшинче ăна
12 хут чăвашла та, вырăсла та пичетлеççĕ.
Пĕтĕмĕшле тиражĕ 150 пине çитнĕ.

Леонид Агаков 50 произведение яхӑн ҫырнӑ. Унӑн кӗнекисен тиражӗ 500 пине ҫитнӗ.

Леонид Яковлевич – чӑваш бестселлӗрӗсен авторӗ. Унӑн хайлавӗсене миллионшар ҫын юратса вулать.

Унӑн произведенийӗсем Тӑван ҫӗршыва юратма, йывӑрлӑхсене ҫӗнтерме, пӗр-пӗрне пулӑшма вӗрентеҫҫӗ.

Салтак эп пулнă

Георгий Орлов

Салтак эп пулнă. Пулнă эп мишень.
Эп пенĕ пăшалпа. Мана те пенĕ
Пĕччен те — вăрттăн, харăс — темиçен
Çĕрле те, кăнтăрла та хирĕç енĕ.

Тустарнă тыррăма таптакана,
Вутта хуракана ватта-вĕтте те,
Ял-хулана, çынна, саманана
Инкек кӳрекене çех пур çĕрте те!

Хура хĕреслĕ выçкăн çăткăна
Шывра та, çĕр çинче те эп тыллана.
Сыхланă Паяна эп, Ырана,
Тăван сасса, тăван юрра сыхланă.